# Орденлă крайри орденлă республикă

Совет Союзĕн Ĕç тăвакан Тĕп Комитечĕ **Чăвашсен Автономлă Социалисăмлă Совет Республикине** тата ăна йертсе пыракан **Петровпа Никитин** йулташсене **Ленин орденĕ** пани çинчен пĕлтернине республикăра рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, тӳрĕ йединоличниксем, совет интелигенчĕсем, мĕн пур ĕçсыннисем чунтан-вартан савăнса хапал туса йышăнĕç.

Ĕтем историнче телейлĕ, савăнăçлă çĕнĕ пурнăç пуçарса панă аслă учител Ленин йачĕпе çыхăнса тăракан наградăна йалхуçалăхĕнче, културă строителствинче, нацилĕ кадăрсем вĕрентсе çитĕнтерес ĕçре, сулйĕр строителствинче патшалăх парăмсенче кăтартулă ĕçленĕшĕн панă пирĕн республикăна тата ăна йертсе пыракан **Петровпа Никитин** йулташсене.

Социалисăм строителствинчи çĕнтерӳсемшĕн болшевикла паттăрлăхпа кĕрешнĕ кашни рабочи, кашни колхозник, кашни тӳрĕ ĕçсынни пайан хавассăн çапла калама пултарать: „**Республикă кĕрешсе илнĕ орден вăл, мана та тивет, орден илме тивĕç панă** çĕнтерӳсенче манăн пай та пур". Вĕсем çинчен вĕт, СТАЛИН йулташ каланă: „Шавламасăр, йанрамасăр саватсемпе хапрăксем, шахтăсемпе чукунçулсем, колхозсемпе совхозсем тăвакан, пурнăçа мĕн кирлисене пурнете тăвакан, пĕтĕм тĕнчене тăрантарса тата тумлантарса пурнакан рабочисемпе хресченсем,—акă камсем чăн-чăн паттăрсем, çĕнĕ пурнăç тăвакансем".

Рабочисемпе хресченсем, чималтан, вĕсем пайанхи савăнăçлă кунăн паттăрĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем хăйсен болшевикла кĕрешӳвĕпе республикăна Ленин орденĕ илме тивĕç пачĕç. Вĕсем—çĕнтерӳ тăвакансем. **Вĕсене Ленин орденĕ илнĕ йатпа хĕрӳлĕ салам!**

Çакăнпа пĕрлех çĕнтерӳсене пуçарса йертсе пыракан, çул çинчи йăвăрлăхсене çĕнтерме ĕçсыннисене куллен мобилизацилесе, хайар кĕрешӳре кадăрсем çитĕнтерсе пыракан, ĕçсыннисен телейлĕ пурнăçĕшĕн хăйсене хăйсем шеллемесĕр ĕçлекен, республикăпа пĕрле Ленин орденĕ илнĕ **Петровпа Никитин** йулташсене вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Ленин орденĕ илни партин чăваш организацине парти Тĕпкомĕ тавра, йуратнă çулпуç Сталин йулташ тавра тата таччăнрах пĕрлештерсе, çĕнĕ çĕнтерӳсем кĕрешсе илме хавхалантарать.

Чăваш республики орденлă крайри орденлă республикă пулса тăчĕ. Çакна çирĕп асăрхамала: **Жданăв** йул., партин Горкий Крайкомĕпе Крайĕçтăвком, **Пражнĕкпа Каганович** йулташсем, Горкий пролетариачĕ тăтăшах пулăшса, ĕçре вĕрентсе пынине пула Чăваш республики Ленин орденĕ илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Республикă ыран хăй 15 çул тултарнă уйава чыслать. Октăбер револуци пулни кăçал 18 çул çитет. Чăваш халăхĕ автономи тивĕçне илни 15 çул тулчĕ. Совет Союзĕ те çул çитмен ачи пек çамрăк, унăн аслă çемйинче тăракан Чăваш республики тата та çамрăкрах. Анчах темĕнле çамрăк пулин те пайанхи Совет Союзĕ богатыр пек вайлă, вăл пайан хурçăлă, шултра индустрилĕ, колхозлă çĕршыв. Кунран кун ӳссе тĕреклеnсе пыракан, **Ленин—Сталин** партийĕ йертсе пыракан мухтавлă çĕршывра тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăхсен пурнăçĕ çурхи пурнăç пек чечекленет. Çавăн çине кăтартса параççĕ Чăваш республикин 15 çул хушшинчи çитĕнӳвĕсем. Çавăн çине кăтартса параççĕ Тутар, Дагестан, Карели, Киргиз, Казак, Башкир, Удмурт, Мордва, Атăл хĕрĕнчи Нимĕç т. ыт. республикăсен çитĕнӳвĕсем, Биробиджан, Мари, Ойрат, т. ытти облаçсен çитĕнӳвĕсем, Украинă, Белоруççи, Узбек, Таджик, Туркестан республикисен, Кавказ лешйĕнчи республикăсен историлĕ çитĕнӳвĕсем. Çавăн çине кăтартса параççĕ Çурçĕрти, Тайгари, Пăрлă тинĕс хĕрĕнчи, Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен çитĕнӳвĕсем.

Совет влаçĕ пусмăрлăхпа чуралăха, ыслăха, ĕççĕрлĕхе, тивĕççĕрлĕхпе мăшкăла, харам пырлăха, капитал пусмăрне тĕппипех кăкласа парахрĕ, хĕнхурпа асап айĕнче пурăннă халăхсене пурнăç тавăрса пачĕ. Совет çĕршывне коммуниссен хăватлă партийĕ, хурçă пек çирĕп Сталин йулташ йертсе пырать. Партипе правителствă Совет Союзĕнчи халăхсене ывăнма пĕлмесĕр пулăшса пыраççĕ. „Чăваш республикин 15 çул хушшинчи советпа хуçалăх тата културă строителстви çинчен", „Чăвашсен Автономлă Социалисăмлă Совет Республики 15 çул тултарнă йатпа амниçти парасси çинчен" Пĕтĕм Раççейĕн Ĕç тăвакан Тĕп Комитечĕн президиумĕ йышăннă решенисем, Чăваш республикине тата ăна йертсе пыраканĕсене Ленин орденĕ парасси çинчен ССРСоюзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă решени партипе правителствă пулăшса пынине кăтартса паракан уçă тĕслĕхсем пулса тăраççĕ.

Чăваш республикин çитĕнӳвĕсем партипе правителства кĕрешсе илнĕ çĕнтерӳсемпе уйăрлми таччăн çыхăнса тăраççĕ. Йăвăр çула утса тухнă, анчах умра тата та пысăкрах ĕçсем тăраççĕ. Çитĕнӳсем тăвасси чыслă ĕç, анчах çитĕнӳсем çумне çĕнĕ çитĕнӳсем хушасси татах та чыслăрах ĕç пулать. Ленин орденĕ тата лайăхрах ĕçлеме, орденлă крайра орденлă республикăн йалавне çулĕ йатса пыма хушать. Болшевиксем çитĕнӳсемпе лăпланма пултараймаççĕ, вĕсем çĕнĕ кĕрешӳсем, çĕнĕ çĕнтерӳсем патне хăйулăн утаççĕ. Çавăн пек ĕçлеме чĕнет парти Обкомĕн телеграмми: „Орден илнĕ Чăваш республикинче йулса пыракан участкăсем пулмала мар. Нимĕнле лăпланса ларни те, нимĕнле мăнкăмăлланни те ан пултăр. Умра тăракан задачăсене пурнăçласшăн тимлĕ кĕрешер".